3583 44-21

ГЕРОИ ОТЕЧЕСТВЕННОЙ ВОЙНЫ

Пирĕн земляксем

И. С. ТУКТАШ

# ПАВЕЛ ЛАПТЕВ





МАРКОВ

И. С. ТУКТАШ

3583

# ПАВЕЛ ЛАПТЕВ

## СОВЕТ СОЮЗĚН ГЕРОЙĚ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

*ЧĂВАШСЕН ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ*
*Шупашкар—1944*

Редактор С. Эльгер.

НТ 00066 Подписано к печати 27-III-44 г. Тираж 3000 экз., объем 1 п. л.
Заказ № 329. Тип. № 1. Управления полиграфиром. при

СНК ЧАССР г. Чебоксары

## „ÇĔКЛЕНĔР МУХТАВЛĂ ПАТТĂРСЕМ!"

Шурăмпуç хăпарать. Вак хăвасем хушшипе авкаланса юхакан Западная Двина шывĕ тăрăх ирхи тĕтре мăкăрланать. Юханшывăн ку енче çăра тĕмсем тĕлĕрсе лараççĕ. Таврара шăп. Ниçта та пĕр чĕрĕ чун çук пек туйăнать малтанлăха тинкерсе пăхсан.

Анчах фронтри шăплăх—пит ултавлă япала. Хаяр аслатиллĕ çăмăр çывхарасса пĕлтерет вăл ытарлă шăплăх. Пĕрре çеç мар тĕрĕслесе пăхнă Павел Васильевич Лаптев вăл чăн та çапла иккенне. Çавăнпа та вăл ун пек чух яланах сыхă тăма вĕреннĕ. Кĕçĕр те акă çатрака йывăç тĕмĕсем хушшинче унăн батарейи туписем пытанса лараççĕ. Вĕсем йывăç тураттисем хушшипе юханшывăн леш еннелле тинкерсе пăхаççĕ. Унта—тăшман. Пĕр самант кăна кирлĕ,—Лаптев орудийĕсем çавăнтах ирхи канăçлăха кисретсе ярса тăшман пуçĕ çине тамăк вучĕ тăкма хатĕр тăраççĕ.

Оруди расчĕчĕсем кĕçĕр çĕрĕпех куç хупман. Батарея командирĕ, хўхĕм те кĕрнеклĕ чăваш, Павел Васильевич Лаптев тахçанах сўнсе кĕлленнĕ чĕлĕмне пуç пўрни çине шаккаса илет те лăпкă сасăпа хăйĕн халланне малалла юхтарать. Çак вăйпитти çирĕп этемĕн лăпкăлăхĕ кăштах тĕлĕнтернĕ пек те туйăнать. Вăл пачах та хыпаланса е вĕткеленсе çўремест. Пĕлет вăл хăш самантра мĕн килсе тухассине, пĕлет—кирлĕ вăхăтра батарея çыннисем кам ăçта пулассине. Халь шуçăм кăна хăпарать-ха. Разведка пĕлтернĕ тăрăх, фашистсем шăп хĕвел тухас умĕн Двина урлă каçса наступлени пуçласа ямалла. Тăшмана мĕнле йышăнмаллине Лаптев малтанах шутласа хунă. Шутласа

хунӑ ҫеҫ те мар, кашни расчётах боевой приказ та парса хунӑ. Ҫавӑнпа та вӑл лӑпкӑ.

Командирӑн сасси ҫемҫе бархӑт евӗрлӗ. Вӑл сӑмахсене ни ытлашши хуҫкаламасӑр, ни ытлашши хӑпартмасӑр, майӗпен кӑна калаҫать. Ӑҫта та пулин сӗм-вӑрманта, ҫунакан вут хӗрринче ун пек лӑпкӑн юхакан калава итлесе ларсан, ҫывӑрас килмелле пек. Анчах та боецсем ыйхӑ ҫинчен аса та илмеҫҫӗ. Вӗсен куҫӗсем ҫӑлтӑр пек ҫутӑлса тӑраҫҫӗ, мӗншӗн тесен командир халлапӗ вӗсен чунӗсене ҫавтери хумхатса янӑ.

— Пурӑннӑ, тет, ӗлӗк-авал аслӑ Атӑл тӑрӑхӗнче пӗр ӗҫчен те йӑваш халӑх. Вӑл халӑх тӗнчере нимӗнрен ытларах пурнӑҫа юратнӑ тет, хӑйӗн ҫӗрне-шывне чечек пахчи туса хума ӗмӗтленнӗ тет, ҫавӑнпа та ирӗн те каҫӑн ҫутӑ хӗвеле пуҫҫапса пурӑннӑ тет. Анчах та пӗр-те-пӗр вӑхӑтра ҫав хӗвел ҫине икӗ пуҫлӑ ӑмӑрткайӑк вӗҫсе пырса ларать те унӑн ылттӑн кӑкӑрне тискер чӗрнисемпе тӑрмалама, тытӑнать. Шурса шупкалса каять ҫутӑ хӗвел йывӑр сурансем тивнипе, пурнӑҫа юратакан этемсене хӑйӗн ҫутине парайми пулса ҫитет. Ҫӗр ҫинче ӳсен-тӑран ҫеҫкесем типсе каяҫҫӗ, йывӑҫ-курӑксем хӑрса лараҫҫӗ. Ӳкӗтлесе кӗлтӑваҫҫӗ мӗскӗн халӑхсем тыткӑнри хӗвеле ҫӗр ҫинчи пурнӑҫа тепӗр хут ҫутатса яма, анчах икӗ пуҫлӑ ӑмӑрткайӑк ниепле те ямасть хӗвеле хӑйӗн хӑрушӑ чӗрнисем хушшинчен...

Пӗр-те-пӗр вӑхӑтрах ҫав аслӑ Атӑл таврашӗнчи халӑхсем хушшинчен никам ҫӗнтерейми вӑйла паттӑр ҫуралса тухать. Кунсерен мар ӳсет ҫакӑ паттӑр, сехетсерен те минутшарӑн ӳсет. Ҫаврӑнса пӑхать вӑл таврари хура халӑх ҫине, ҫаврӑнса пӑхать те—туйса илет унӑн нушине-инкекне. Унтан ҫапла хыпар сарать вӑл пӗтӗм таврана:

«Эп пӗлетӗп сирӗн инкекӗре пӗтермелли меслете, пултаратӑп эпӗ сар хӗвеле тыткӑнран хӑтарма! Ярӑр ман патӑма кашни йӑхран-ӑруран ҫитмӗл те ҫичӗ пат-

тăр улăп. Ертсе кайăп эп вара вĕсене икĕ пуçлă тискер кайăк çине вăрçăпа, унăн хура юнне юхтарма».

Уйăрса параççĕ халăхсем çакă паттăра хăйсен чи чаплă ывăлĕсене, уйăрса параççĕ те калаççĕ: «Хĕвеле тыткăнран хăтармасăр ан таврăнăр тăван çĕршыва»,—теççĕ. Атăл паттăрĕ хăйне валли хĕç туса пама хушать. Çитмĕл те çичĕ халăхăн тимĕрçи туптать вăл хĕçе. Хура кăмрăк вырăнне çитмĕл те çичĕ халăхран пĕрер тумламăн пухнă таса юна çунтарса шăратаççĕ унăн хурçине. Йăтса пăхать Атăл паттăрĕ çавă ăста тимĕрçĕсем туптаса тунă никам йăтайми хĕçе. Йăтса пăхать те, виçĕ хутчен пуçĕ тавра çавăрса, çапла калать: „Халĕ ĕнтĕ мана урхамах-ут тупса парăр", тет. Тухса тăрать вара Атăл паттăрĕ умне пĕр кăвар чĕреллĕ çамрăк паттăр. Тухса тăрать те Атăл паттăрне çапла сăмах калать: „Çичĕ ярăм пăрлă тусем урлă каçса килтĕм эп сан патна, мухтавлă паттăр. Мана халăх çичĕ хутлă пĕлĕте çĕклесе хăпартакан çунатсем туса пачĕ, тыткăнри хĕвеле ирĕке кăларма хушса ячĕ. Лар ман çунаттăмсем çине! Эпĕ хам пулăп санăн çилçунатлă урхамаху, эпĕ хам илсе çитерĕп сана тыткăнри хĕвеле хăтарма,—тет. Савăнсах каять Атăл паттăрĕ, ку сăмахсене илтсен. «Эсĕ манăн чи çывăх та чи шанăçлă тусăм пулăн малашне», тет хăйĕн çĕнĕ юлташне. Унтан каллех хĕçне пуçĕ тавра виçĕ хутчен çавăрать те пĕтĕм паттăрсене çапла йыхрав парать:

— Эй, çĕкленĕр, мухтавлă паттăрсем!—Хăйсем çавăнтах хăватлă çунатсем çине ларса пĕлĕт çине улăхса каяççĕ. Улăхса каяççĕ Атăл паттăрĕпе унăн тусĕ çиччĕмĕш пĕлĕт çине, вĕçсе тухаççĕ икĕ пуçлă хăрушă тискер кайăк умне. Пĕррех сулса ярать Атăл паттăрĕ хăйĕн хурçă хĕçĕпе тискер кайăка. Сулса ярать те— тискер кайăкăн пĕр пуçĕ татăлса ӳкет. Тепре сулса ярать Атăл паттăрĕ çутă хĕçпеле. Сулса ярать те хăрушă кайăкăн тепĕр пуçĕ татăлса ӳкет. Кайăкăн

наркăмăшлă чĕринчен çĕр çине хура юн тăкăнать. Вара Атăл паттăрĕ çут хĕвеле илсе хăйĕн хĕвне чикет.

Ухă йĕппи пек чарласа анаççĕ кун хыççăн Атăл паттăрĕпе унăн тусĕ çĕр çине. Тискер тăшман çаплах вилмен иккен-ха. Унăн шăршлă юнĕн кашни тумламĕнчен çĕленсем çуралса тухаççĕ. Наркăмăшлă сăннисене кăларса çĕр çийĕпе шуса çӳреççĕ. Ирсĕр шăршă тапса тăрать вĕсенчен йӳçĕ тĕтĕм пек, çав йӳçĕ тĕтĕм хупăрласа тăрать çутă пĕлĕте ырă ĕмĕтлĕ этемрен.

— Эй, çĕкленĕр, мухтавлă паттăрсем!—тесе йыхравлать Атăл паттăрĕ пĕтĕм халăха. Çĕкленеççĕ маттур Улăпсем, пурте пĕр чĕреллĕ пулса тытăнаççĕ турама çап-çут хĕçĕсемпеле ирсĕр çĕлен-калтана. Пĕр чун юлмиччен вĕлерсе пĕтереççĕ вĕсем çавă ирсĕр йăх-яха. Вара Атăл паттăрĕ хĕвеле хĕвĕнчен кăларать те этемсене çĕклесе кăтартать:

— Акă вăл пирĕн пурнăçăн телейĕ!

Вăр-р-р! кустарса ярать вăл ырă пурнăç çуттине пĕлĕт çинелле. Вара çĕр çинче этемсемшĕн каллех савăнăçпа ырлăх çитет. Хавасланнă халăхсем мухтав юрри юрлаççĕ... Халлапри паттăр—Атăл паттăрĕ,—юлташсем, вăл пирĕн Аслă çулпуçĕ Ленин пулнă...

Командир халлапне вĕçлерĕ. Боецсем, çак чаплă юмаха итленĕ хыççăн, пĕр самант хушши никам пĕр сăмах хушма хăйман пек пулса тăчĕç. Анчах командир сехетне кăларса пăхрĕ те ура çине сиксе тăчĕ.

— Тул çутăлчĕ, юлташсем. Часах хĕрӳ çапăçу пуçланĕ. Çĕкленĕр, мухтавлă паттăрсем!—терĕ вăл юлташĕсене кăмăллăн.

## ХУРА ÇĂВАРА—ШАЛÇА!

Хĕвел тухайман-ха. Анчах таврана тахçанах кун çути çапнă. Батареецсем, хăйсен расчĕчĕсем тăрăх вырнаçса тăнă та, приказ пуласса нимĕн хусканмасăр кĕтеççĕ.

Лаптев наблюдательный пункта пычĕ. Сехетне кă-

ларса пăхрĕ. Унтан бинокль витĕр юханшывăн леш енне тинкĕрсе сăнама пуçларĕ. Вак-тĕвек йывăç тĕмĕсемпе сайра тĕмескесемсĕр пуçне нимĕн те курăнмасть. Çак тĕмескесем хушшинче тăшман пытанса выртать теме те çук пек малтанласа.

Пĕр самант хушши Павел Васильевич нимĕн хускалмасăр ларчĕ. Тăшман станĕнче мĕнле те пулин этем мĕлки, мĕнле те пулин хускану пулмĕ-и, тесе шутларĕ вăл. Анчах Двина çыранĕсем, малтан мĕнле чунсăр пулнă, халĕ те çаплипех. Чее вĕт-ха нимĕç! Хăйсем пуррине палăртасшăн мар, сволăчсем!

Сасартăк катаран-лерен, юханшыв леш енчен, кĕрлевлĕ сасă илтĕнсе кайрĕ. Лаптев тинкерсе итлет. Çук, пĕр сасă çеç мар иккен кунта, темиçе мотор сасси. Ахăртнех танксем килеççĕ пулĕ. Анчах ăçта-ха вĕсем?

Моторсен шавĕ çывхарнăçем çывхарать. Акă гусеницăсем чăнкăртатни те пачах çывăхрах илтĕнет ĕнтĕ. Машинисем хăйсем çеç курăнмаççĕ... Тата ытларах тинкерсе пăхать командир тĕтреллĕ таврана. Тата ытларах тинкерсе итлет. Çук, танксем курăнмаççĕ. Халĕ тата акă темшĕн моторсен шавĕ те лăпланчĕ. Пĕр-пĕр вăрттăн айлăма кĕрсе вырнаçтарса лартрĕç пулас гитлеровецсем хăйсен хурçă эрешменĕсене.

Фронтра обстановка сехетпе мар, минутпа та секундпа улшăнать. Ăна Лаптев питĕ лайăх пĕлсе тăрать. Çавăнпа та тăшмана самантлăха та сăнама пăрахмасть. Чăнах та, ку вăхăтчен чунсăр тĕлĕрсе ларнă тĕмескесене сасартăк чун кĕчĕ. Вĕсем сĕвекрех çыран хĕрринелле шăвăнма пуçларĕç. Унччен те пулмарĕ, тĕмсем хушшинчен симĕс тумтирлĕ салтаксем сиксе тухса, юханшыв хĕррипе чупкаласа вĕткеленме пуçларĕç.

Вĕсем нумайăн, çĕр çынтан та ытларах пулĕ. Халĕ ĕнтĕ, ирхи хĕвелĕн пирвайхи пайăркисем çутатнипе, вĕсем питех те лайăх курăнаççĕ. Хушши инçех те мар: е километр, е унтан кăшт ытларах анчах. Лаптев сăнать, гитлеровецсем çинчен куçне те сиктермест.

„Курăпăр, мĕнле кучченеç çине килсе тăрăнĕç“, тесе шутлать вăл хăй ăшĕнче.

Юханшыв хĕрринче тĕрмешекенсем—нимĕç сапёрĕсем иккен. Вĕсем пĕр вăхăтрах ик-виç вырăна понтонсем хываççĕ, сулăсем туса майлаштараççĕ. Хăйсем çавтери васкаса ĕçлеççĕ, тата пирĕн енчен никам та пеменнине кура хăюлăнах хăтланаççĕ.

Батарейăсем те аванах курса тăраççĕ симĕс тумтирлĕ фрицсене. Ай-яй, пит те меллĕ пулмаллаччĕ пĕрер дюжин вĕри кучченеç ярсан вĕсен пуçĕсем çине! Анчах пеме тытăнасси çинчен командиртан çаплах приказ çук. Мĕн кĕтсе тăрать-ха вăл? Эх тĕтĕресчĕ пĕрре!

Батареецсем командная пункт еннелле чăтăмсăррăн пăха-пăха илеççĕ. Командир васкамасть. Вăл хăй шутласа хунă саманта кĕтет.

Акă фашистсем понтонсем хурса пĕтерчĕç, суллисене майлаштарса çитерчĕç. Халĕ ĕнтĕ хыçаларахри тĕмсем хушшинчен тата тепĕр ушкăн салтак кĕшĕлтетсе тухрĕ. Вĕсем хăйсем хыçĕнчен çăмăл тупăсем, станковăй пулеметсем сĕтĕрсе килеççĕ. Мĕн сĕтĕрсе килнине пĕр понтонсем çине вырнаçтарса лартаççĕ.

Лаптев çаплах васкамасть. „Пулать-тĕк пултăр урапан çапса ӳкерекен ĕçкĕ. Антив—пурне те пĕртан сăй пултăр, антив—пурте пухăнса çитчĕр“,—тесе шутлать вăл хăй ăшĕнче. Сасартăк Лаптев умĕнчи полевой телефон канăçсăрăн нăрлатма пуçларĕ. Вăл трубкăна алла илчĕ:

— Итлетĕп. Мĕн? Каçаççĕ тетĕн? Куратăп... Эп, хушмасăр пĕрре те пемелле мар!

Юханшывăн леш енче каллех моторсен шавĕ çĕкленчĕ. Сулахай енчи айлăмран виç-тăватă танк шăлĕсене хăйраса шуса тухрĕç. Нимĕç салтакĕсем сулăсемпе понтонсем çине кĕпĕрленсе тулчĕç те ерипен çыранăн ку еннелле ишме пуçларĕç. Акă хăçан çитрĕ вăл кĕтмен хăнасене юнлă ĕçкĕпе чысламалли хаклă самант!

— По фашистским разбойникам... беглый огонь!—команда пачӗ хăватлă сасăпала Лаптев. Батарейăри орудисем пурте пӗр харăс хаяр аслати пек ахлатрӗҫ. Нимӗҫсен пуҫӗ ҫине хурҫă кучченеҫсем шăхăрса вăрхăнчӗҫ.

— Огонь!

Каллех тимлӗн те вирлӗн кӗрслетрӗҫ тупăсем. Каллех тăшман пуҫӗ ҫинче тамăк вучӗ ялтлатса ҫиҫрӗ. Унтан пӗр вунă минут хушши пӗр канăҫсăр кӗрлесе тăчӗҫ тупăсем. Фашистсен тискер кайăкла ушкăнӗнчен нимӗн те тăрса юлмарӗ... Айăн-ҫийӗн чикеленсе сирпӗнчӗҫ сывлăша нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсем. Чӗрпӗл-чӗрпӗл ишӗлсе арканчӗҫ понтонсемпе сулăсем. Татăкăн-кӗсӗкӗн сапаланса чăмпăлтатрӗҫ шывалла тупăсемпе пулеметсем. А танксем—хăтăлнисем каялла тарчӗҫ, хăтăлайманнисем—ҫавăнтах хура тӗтӗмпе мăкăрланса хыпса кайрӗҫ...

Ҫапăҫу лăпланнă хыҫҫăн Павел Васильевич хăйӗн дневникӗ ҫине кӗскен ҫапла ҫырса хучӗ:

«1941 ҫул, июлӗн 7-мӗш. Сиротино станци ҫывăхӗнче. Фашистсем юханшыв урлă каҫса пирӗн ҫине атака тума хăтланчӗҫ. Ӗҫ тухмарӗ вӗсен! Пурне те юнпа—нимӗрлентерсе шыва путартăмăр. «Хура ҫăварала шалҫа!» теҫҫӗ пирӗн чăвашсем. Эпир ҫавăн пек турăмăр».

Анчах та нимӗҫсем лăпланса тăман. Пысăк ҫухату тӳснине пăхмасăрах, вӗсем юханшыв урлă мӗнле те пулин хăвăртрах каҫма сӗмсӗрленнӗ, ҫине-ҫинех кӗпер хывнă. Лаптев батареи нимӗҫсене виҫӗ талăк хушши тытса тăнă. Вăл кашни тапхăрӗнчех вӗсене ҫӗнӗрен хывнă кӗпер ҫине кӗме ирӗк панă. Анчах, пӗтӗм кӗпер ҫийӗ нимӗҫ войскисемпе тулса ҫитсенех, Лаптев орудийӗсем сасартăк пеме тытăннă. Кӗперсем каллех арканнă. Вӗсем ҫийӗпе каҫма тăнă фашистсем, пӗтӗм ҫар техникисемпе пӗрлех, шыва путса пӗтнӗ. Ҫапла Лаптев артиллерисчӗсем виҫӗ талăк хушшинче нимӗҫсен ултă кӗперне ҫӗмӗрсе тăкнă, кӗперсемпе пӗрле тăш-

манӑн нумай салтакне, нумай хӗҫпӑшалне юханшыв тӗпне путарнӑ.

## СТАРОЕ СЕЛО ПАТӖНЧЕ

Ку ӗҫ 1941 ҫулти июль уйӑхӗнче Белоруссире, Старое Село ятлӑ станци патӗнче, хаяр ҫапӑҫусем хыҫҫӑн кӑшт каннӑ вӑхӑтра пулса иртнӗ.

— Кам каларӗ сире юрӑ кирлӗ мар тесе? Тар шӑрши ҫапнӑ этемшӗн юрӑ хӗвелпе уҫӑ сывлӑш пекех сиплӗ. Чуна уҫать вӑл, кӑмӑла ҫӗклентерет,—терӗ те командир, ура ҫинӗ сиксе тӑчӗ.

Акӑ вӑл пилоткине тӳрлетсе лартрӗ, кӗҫ-вӗҫ пуҫлас юрра итлеме хатӗрленчӗ. Пайтах хура-шур тӳссе иртternӗ „ватӑ казак" Глушко (батареецсем ӑна ҫапла чӗнеҫҫӗ) малтан ҫӑра уссине шӑлкаласа якатрӗ, унтан сӑнавлӑн юлташсем ҫине пӑхса илчӗ.

Вӑрҫӑн кӗске вӑхӑтлӑх лӑпкӑ самантӗнче вӗсем аланах ҫапла пӗрле пухӑнса ларма юратаҫҫӗ. Йывӑр походсем, чӑлт куҫ хупмасӑр ирттерсе янӑ канӑҫсӑр каҫсем, тамӑкри пек вут ӑшӗнче ҫунса пиҫни—ҫаксем пурте вӗсене пӗр варта ӳссе ҫитӗннӗ тӑвансем пек туслаштарнӑ. Командирӗ вӗсен, Атӑл кӑкри ҫинче чӳхенсе ҫирӗпленнӗ йӗкӗт,—вӗсемшӗн начальник та, сывӑх юлташ та, тус та. Кирлӗ чух вӑл—хушать, кирлӗ чух ыйтать, вӗсемшӗн никам авайми ҫирӗп чунлӑ пуҫлӑх пулать. Паян акӑ вӑл, ҫак кӗске шӑплӑх самантӗнче, пуриншӗн те чи юратнӑ юлташ,—чи сывӑх тус.

— Пуҫла, Глушко. Шутсӑр юрататӑп эпӗ Украина юррисене,—тет вӑл, хӑйӗн боецне ӳкӗтленӗ пек пулса.

Глушко тӳрех пуҫласшӑн мар, турткаланса тӑранҫи пулать, тата вӑхӑчӗ те халь юрӑ вӑхӑчӗ мар-ҫке, тесе систересшӗн пек хӑтланкалать. Анчах ӑна ыттисем те ҫине тӑрсах хистеме пуҫларӗҫ.

— Ну, пуҫла тата хӑвӑртрах!

— Мӗн тархаслаттарса тӑратӑн ӗнтӗ?

— Пуçла, батько!—терĕç украинец боецсем.

Глушко, тепĕр тапхăр шутлакаласа тăчĕ те, уçă та çемçе сасăпа юрлама тытăнчĕ:

Ой, что же то за ворон,
Что над Днепром летает?
Ой, что же то за войско
В Триполье вступает?

Анчах пĕр çавра юрласанах вăл чарăнчĕ, малалли сăмахсене аса илме тăрăшнă пек пўлĕнсе тăчĕ. Унтан сасартăк, кĕтмен-туман çĕртенех сассине улăштарса, пачах урăх кĕвĕпе шăрантарма пуçларĕ:

Мне, право, все равно,—я буду
На Украине жить или нет,
Меня вспомянут иль забудут
В снегах, в далёкой стороне,—
До этого нет дела мне.
Одно лишь мне не все равно:
Что Украину злые люди,
Лукавым убаюкав сном,
Ограбят и в огне разбудят...
Ох, это мне не все равно!

Малтан лăпкă та хуйхăллăрах сасăпа пуçласа янă юрă, вăйланнăçемĕн вăйланса пырса, шухă тăвăл пек кĕрлерĕ. Юлашки сăмахсем Глушко чĕринчен вĕри çилĕ çĕклесе кăларнă пек хумханса тухса илтĕнчĕç. Глушко юрлама чарăнчĕ. Унăн питçăмартисем тăрăх куççуль тумламĕсем юхса анчĕç.

— Салхуллă юрă юрлатăн эс, Глушко. Пĕрремĕш хут илтетĕп эп санран капла юрланине,—терĕ Лаптев, шухăша путнă украинец çине сăнаса пăхса.

— Атте юрлатчĕ ăна...—тавăрчĕ Глушко.

— Халĕ ăçта вăл, сан аçу?

— Киле юлнăччĕ... Тен тахçанах нимĕçсем вĕлернĕ пулĕ. Çемьем те унтах юлсаччĕ...

Глушко кусне шурă сăмса тутрипе шăлса илчĕ.

— Çемçе чунлă эсĕ, Глушко,—терĕ ăна командир çирĕппĕн. Вăрçăра ун пек пулма юрамасть. Чул пек хытă пултăр санăн чуну. Куççуль мар, çилĕ вĕресе тăтăр чĕрӳнте!

Командир ура çине тăчĕ. Вĕтлĕх вăрман хĕррипе иртекен чугунçулĕ тăрăх тинкерсе пăхрĕ. Малта— пĕчĕкçĕ станци. Пĕчĕкçĕ çуртсем хыçĕнчен тĕтĕм пашлатса тухни курăнать. Епле состав çитсе тăнă-ши ĕнтĕ ку станцăна?

Разведка часах тĕп-тĕрĕс хыпарсем илсе çитерчĕ. Старое село станцине тăшман эшелонĕ килсе çитнĕ. Салтаксем, танксем, çар хатĕрĕсем.

Командир пĕр самантрах решени йышăнать: атакăлас. Ака çавăнтах вăл пур орудисене те хӳтлĕхрен уçă позицине кăларса лартма приказ парать. Унччен те пулмасть,—тупăсем кĕрĕслеттерме те пуçлаççĕ. Чи малтан паровоза сывлăша сирпĕнтерсе яраççĕ. Унтан вагонсем тăрăх пеме пуçлаççĕ. Совет артиллерисчĕсем кĕтмен çĕртен çĕмĕре пуçланипе ăнран тухнă гитлеровецсем нимĕн те ăнланса юлаймаççĕ. Тăватă танк, темиçе теçетке фриц ĕмĕрлĕхех леш тĕнчене ăсанаççĕ çак хăюллă налётпа.

Çакăн хыççăнах станцине нимĕçсен пысăк вăйĕ пырса çитет. Тепĕр кунхине Хĕрлĕ Çар чаçĕсен каялла чакмалла пулать. Лаптев батареи те, çĕр хута чакса, ире хирĕç Витебск хули патĕнче чарăнса тăчĕ. Витебск хули хĕрринче хаяр çапăçусем пуçланаççĕ. Çапăçу пилĕк куна тăсăлать. Лаптев батареи вырнаçса тăракан позици çине нимĕçсем кашни кун темиçешер атака тăваççĕ. Пехотăпа таччăн çыхăнса тăракан артиллери нимĕç атакисене вирлĕн çунтара-çунтара, пысăк çухату кӳрсе каялла сире-сире ярать. Çапăçу хирĕ фашистсен виллисемпе акăнать. Анчах та нимĕç çарĕн командованийĕ, Витебск хулине илесех тенипе, нимĕнле çухатăва та шутласа тăмасть. Атакăна вăл çĕнĕрен çĕнĕ

çaççем кĕртсе пырать. Ӳсĕр фрицсем вилнĕ юлташĕсен ӳчĕсем урлă каçа-каçа малаллах талпăнаççĕ.

Пилĕк кун хушшинчи çапăçусенче Лаптев батареи нумай нимĕççене çулса хучĕ. Унăн орудийĕсем, тӳрĕ наводкăпа персе тăрса, тăшманăн çирĕме яхăн танкне тата темиçе çĕр салтакĕпе офицерĕсене пĕтерсе тăкрĕç.

## ХĔРЛĔ ÇĂЛТĂР ОРДЕНĔ

«Тăшмана яланах питĕнчен пăх. Ана тӳрĕ наводкăпа персе йăвантар». Çакăн пек традици тытса пынă Лаптев яланах хăйĕн батареинче. Кунсăр пуçне унăн тепĕр заповедь пулнă: «Пехотăна шанчăклăн пулăш, стрелок-пехотинецсен чăн-чăн тусĕ пул!» Çак икĕ правило Лаптев батареине кирек епле боевой задачине те ăнăçлăн пурнăçлама май панă.

1941 çул. Шартлама хĕл кунĕсем...

Фронт линийĕ Наро-Фоминск участокĕнчи Отепцов ялĕ çывăхĕнчен иртет. Пирĕн чаççем оборонăра тăраççĕ. Отепцов ялне сыхлас задачăна çывăхри стрелковăй подразделенисем çине хунă. Лаптев хăйĕн батареипе пехотинецсенчен кăшт хыçалтарахра тăрать. Вăл пĕлет: нимĕççем хăть мĕн пулсан та пирĕн войскăсене ку вырăнтан хĕссе кăларма тăрăшаççĕ-тăрăшаççех.

Чăнах та, нумай та вăхăт иртмест, нимĕççем пирĕн пехота çине çав тери вăйлăн атака тума тытăнаççĕ. Гитлеровецсем, чуллă çыран хĕррине пыра-пыра çапăнакан хаяр хумсем пек, умлă-хыçлă перекатсемпе шăва-шăва килеççĕ. Вĕсем нумайăн, шутне-хĕрне те пĕлме çук. Анчах пирĕн боецсем тăван çĕршыва кăкăрпа, гранит пек çирĕппĕн, сыхласа тăраççĕ. Пĕр утăм та чакмаççĕ вĕсем тăшман умĕнчен. Ирсĕр вăрăхурахсене мĕн курнине пĕр винтовкăсемпе пулемётсенчен пере-пере ăшалантараççĕ.

Ниепле те ĕç тухманнине кура фашистсем урса кай-

сах тапăнма пуçлаççĕ. Акă вĕсем пирĕн малти ретсем çине авиаципе тапăнчĕç, пĕр харăсах икĕ флангран та танксемпе çĕмĕрсе кĕме тапратрĕç. Танксем хыçĕнчен автоматчиксем сăрхăнса кĕреççĕ.

Чăтса тăраймарĕç çак тискер вăйăн талпăнуне пирĕн пехотинецсем. Вĕсен ирĕксĕрех каялла чакма тиврĕ.

Анчах та Лаптев батареисем чакмаççĕ. Вĕсем хăйсен вырăнĕнчех тăрса, чакма пуçланă пехотăна хӳтĕлеççĕ.

— По вражеским танкам, прямой наводкой огонь!— команда парать Лаптев шăп та шай çак вăхăтра хăйĕн батареисене. Хаяр аслати евĕр çĕре кисрентерсе вут-хĕм сирпĕтме тытăнаççĕ тупăсем ирсĕр тăшман пуçĕ çине. Вут-хĕмпе тĕтĕм кăна явăнса тăрать фрицсем çинче, вутлă çăмăр çунă пек шрапнель тăкăнать автоматчиксем çине. Тăшманăн атаки çавăнтах хăйĕн хура юнĕпе чыхланса ӳкет. Фашистсем, çапăçу хирне çăра тĕтĕмпе йăсăрланса выртакан темиçе танк пăрахса хăварса, калла тапса сикеççĕ.

Çакăнти çапăçура çĕнтерӳллĕ чаплă ĕç тума пулăшнăшăн Хĕрлĕ Çар командованийĕ Павел Васильевич Лаптева Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăламалла тăвать.

## ВУНĂ ХУТ ЫТЛАРАХ ТАВĂРĂП!

Верея хулишĕн хаяр çапăçу пырать. Тăшман, арлан евĕр, çĕр айне алтăнса кĕрсе выртнă та, пирĕн пехотнăй çарсене пуç çĕклеме памасăр персе тăрать. Фашистсен огневой точкисене пĕтересси—артиллерин хисеплĕ ĕçĕ.

Лаптев хăй батареинчен икĕ наблюдатель илет те пĕр çӳллĕ çуртăн чартакĕ çине улăхса ларать. Кунтан тăшманăн огневой точкисем янках курăнса выртаççĕ. Вĕсене пурне те картă çине паллă туса хăвăртрах хамăр батарейăна пĕлтермелле.

Нимĕçсем çак наблюдательный пункта асăрхарĕç иккен—тупăсенчен пеме тытăнчĕç. Акă пĕр снаряд пӳрт

тăррине ӳксе çурăлчĕ. Осколкă лекнипе Лаптевăн икĕ разведчикĕпе пĕр связисчĕ çавăнтах ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупрĕç. Пӳрте вут хыпса илчĕ...

Пĕр самахсăр, пĕр тумлам куççуль кăлармасăр сывпуллашрĕ Лаптев çывăх юлташĕсемпе. Хаяр çилĕ кăна чăтма çук çĕкленсе тухрĕ унăн чĕринчен, тата чышкисем хытăраххăн чăмăртанчĕç.

— Тавăрăп! Вунă хут, çĕр хут ытларах тавăрăп!— тупа турĕ вăл тăван çĕршывшăн пуçне хунă юлташĕсем умĕнче.

Чартак çулăмпа йăлкăшса çунать. Куçа йӳçĕ тĕтĕм çиет. Малалла кунта ларма май та çук ĕнтĕ. Анчах Лаптев хăй вырăнчех: мĕншĕн тесен аллаппи çинчи пекех лайăх курăнать кунтан тăшман вырăнаçса тăракан вырăн.

— Тавăрăп! Асап тӳсекен çĕршывăмшăн та, вăхăтсăр пуç хунă юлташсемшĕн те,—пуриншĕн те тавăрăп!—пăшăлтатаççĕ унăн типсе çунса кайнă тутисем. Тамăкри пек кĕрлесе тăракан вут ăшĕнченех вăл хăйĕн наводчикĕсене командăсем парса тăрать:

— По пулемётным гнездам—дальнебойной гранатой, взрыватель — осколочный, угломер 45 — 30, уровень 30—0, прицел 115—огонь!..

Орудисем хăвăрт та тĕл пересçĕ. Снаряд çине снаряд вăркăнать тăшман еннелле. Пĕр самантран тăшманăн огневой точкисем вырăнне фрицсен виллисемпе çĕр тĕпренчĕкĕсем кăна сапаланса выртса юлаççĕ.

## ЧĂРĂШ ТĂРРИ ХУМХАНАТЬ...

Вăрман уçланки хĕрринче çӳллĕ чăрăш ларать, лăпкă çил вĕрнипех тапхăр-тапхăр хумханать. Çук, çил мар хускатать халь ăна, урăх сăлтавпала хумханать çӳллĕ чăрăш тăрри. Унăн çăра та лăс тураттисем хушшине тĕреклĕ çын пытанса ларнă. Темиçе сехет хушши ĕнтĕ тӳсĕмлĕн чăтса ларать çакă чăрăш тăрринче лейтенант

Лаптев. Хĕрĕх градуслă февраль сивви пите-кусa чĕпĕтет. Ал-урасем шăнса кӳтнипе пĕлмиех пулса кайнă. Ик куçран пĕр вĕçĕмсĕрех куççуль шăпăртатса тăкăнать.

Пӳрнесем кăранташ тытайми пулса çитрĕç. Анчах Лаптев пур-пĕрех хаяр сивве парăнмасть. Икĕ кунччен çапла наблюдатель пулса икшер-виçшер сехет сăнаса ларать вăл çӳллĕ чăрăш тăрринче. Çак майпа тăшманăн çывăхри огневой точкисене пурне те картă çине ӳкерсе илет. Дотсемпе дзотсем хăш вырăнтине, ăçта епле вăйсем вырнаçса тăнине пĕтĕмĕшпех палăртса çитерет.

Ивеще ятлă ял—тăшманăн питех те кирлĕ стратегиллĕ пункчĕ. Нимĕçсем кунта тĕплĕн çирĕпленсе ларнă. Хале вĕсене шартлама сивĕ çине хӳтертсе кăлармалла.

Ирхине 9 сехет. Лаптев батареин тупписем пĕр харăс ухлатма пуçлаççĕ. Снарядсем тӳрех нимĕçсен огневой точкисем çине ӳке-ӳке çурăлаççĕ. Кăлăхах пулмарĕ иккен батарея командирĕ çӳллĕ чăрăш тăрринче темиçе сехет хушши чăтăмлăн сăнаса ларни! Акă ĕнтĕ халĕ пĕтĕм ĕç куç умĕнчех: тăшман дзочĕсемпе блиндажĕсем вырăнче шăн тăпра муклашкисем кăна сапаланса выртаççĕ.

Пирĕн пехота наступлени пуçласа ячĕ.

Павел Васильевич хăйпе пĕрле пĕр разведчик илет те стрелковый полк командирĕн командная пунктне фронтри лару-тăру мĕнлине пĕлтерме каять.

— Артподготовка туса ирттертĕмĕр, подполковник юлташ,—тет вăл полк командирне честь парса.

— Матур, паттăрсем! Пĕтĕм полк ячĕпе сире чĕререн тав тăватăп!

— Служу Советскому Союзу!—хавхаланса ответлет Лаптев.

Каялла таврăннă чух вĕсем вăрманта хăйсен артиллерийски полк командирне тĕл пулаççĕ.

— Ĕçсем епле?—ыйтать командир. Павел Васильевич ăна кĕскен, анчах нимĕн те манса хăвармасăр каласа парать, хăйĕн наблюдательный пунктне малти рете куçарма ирĕк пама ыйтать.

— Юрать,—тет полк командирĕ.—Тăшманпа паттăрăн çапăçма сывлăх сунатăп!

...Пирĕн пехота наступлени пуçласа ярать. Акă фронтăн малти линийĕнчи подразделенисем малалла пырса атакăна кĕрсе кайрĕç. Павел Васильевич та вĕсенчен юлмасть. Вăл, темиçе разведчик тата связист илчĕ те, хăвăрт малалла шума тытăнчĕ.

Умра—тăшман салтакĕсем тăракан ял. Вăл яла çитсе кĕресси нумай та юлмарĕ ĕнтĕ—çĕр е çĕраллă метртан та ытла мар.

Сасартăк, шартлама сивĕ сывлăша чĕтрентерсе, пулемёт шатăртатса кайрĕ. Çумранах пульăсем шăхăрса иртрĕç. Лаптев боецсене чарăнма паллă пачĕ. Пурте, пуçĕсене чиксе юр ăшне лăпчăнса выртрĕç.

Пĕр самант иртсен, пулемёт шăпланчĕ. Лаптев ерипен пуçне çĕклесе пăхрĕ.

— Тра-та-та-та-та!—шатăртатма пуçларĕ каллех пулемёт. Уй хĕрринчи пĕчĕк çурт айăккинчи тĕмеске хыçĕнчен шупка вут çути чăлтлатса сирпĕнни курăнчĕ.

— Тра-та-та-та! Тра-та-та-та-тат!—чарăна-чарăна çатăртатать тата тепĕр пулемёт. Ку та çак вырăнтанах вилĕм хĕлхемĕ сапать иккен пирĕн çар сыннисем çине. «Эх, асăрхаймарăм!»—хăй çине хăй тарăхса илчĕ Лаптев.—«Никам та мар, хам асăрхаймарăм...»

— Петрунин! —шăппăн чĕнсе хăй еннелле кăчăк туртрĕ вăл. Çамрăк боец йăпăр-япăр ун патне шуса та çитрĕ.

— Петрунин, авăрла гранатусене. Эсĕ манпала пĕрле пыратăн. Ыттисем вăхăтлăха кунтах юлаççĕ,—приказ пачĕ командир.

— Есть!—тавăрчĕ лешĕ.

— А эпĕ?—пăшăрханнă пек пулса ыйтрĕ юнашарах

выртакан Глушко. Павел Васильевич пуҫне ун еннелле пӑрчӗ. Вӗсен куҫӗсем тӗл пулчӗҫ. Пӗр самахсӑрах ӑнланса илчӗ Атӑл чӑвашӗ вата украинец чӗринчи тӑванла вӗри туйӑма. Глушко ӑна хӑйсӗр пуҫне ярасшӑн мар иккен, унтан уйрӑласшӑн мар иккен, эхер те апла-капла пулас пулсан, чи ҫывӑх ҫынран та ытларах юратнӑ командирӑн пурнӑҫне вӑл хӑйӗн сарлака кӑкрипе сыхласшӑн иккен... Лаптев ҫак тӑванлӑха ӑнланчӗ.

— Атя,—вилӗмрен хӑрамастӑн пулсан!—терӗ вӑл, аллипе малалла сулса.

Вӗсем, юр кӗрчӗсене йӑранлантарса, малалла шуса кайрӗҫ. Акӑ уй хӗрринчи ҫурт та умрах. Анчах мӗнле майпа пӑчлантармалла-ха ҫакӑ вилӗм йӑвисене? Гранатӑпа? Ҫук, виҫ-тӑватӑ граната ыватнипех чыхлантарайман ирсӗр тӑшмана. Шанчӑклӑ кучченеҫ кирлӗ вӗсене, хаяр ҫулӑмпа ҫунтаракан вӗри снарядсем кирлӗ!

— Петрунин!—терӗ вӑл, ҫавӑнтах хӑвӑрт решени йышӑнса.—Халех наблюдательный пункта шуса ҫит те—артиллерирен пеме хуш.

— Епле-ха, командир юлташ, кунта нимӗнле ориентир та ҫук-ҫке?—ӑнланаймасӑр ыйтрӗ лешӗ.

— Ориентир—эпӗ. Ман пуҫ урлӑ ҫирӗмпилӗк метр малалла тӗллесе печчӗр,—хушрӗ командир.

— А эсир?..—хӑраса шурса кайрӗ ҫамрӑк разведчик.

— Урӑх ан калаҫ. Срок сана вунпилӗк минут. Ӑнланатӑн-и?—ҫирӗппӗн касса татрӗ Лаптев.

— Ӑнлантӑм...—пӑшӑрханса ответлерӗ ҫамрӑк салтак. Унтан ҫав самантрах каялла хырӑмпа шуса кайрӗ.

Нумай та вӑхӑт иртмерӗ, икӗ снаряд Лаптев пуҫӗ урлах шӑхӑрса каҫса кайрӗҫ. Вӗсем юнашар дзот ҫине шӑп та шай тӗлех пырса ӳкрӗҫ. Лаптевӑн шинель арки ҫине чуллӑ тӑпра кӑна витӗнсе юлчӗ. Вӑл пуҫне ҫӗклесе пӑхрӗ, ҫав-ҫурӑмӗпе ҫӑмӑл хусканусем туса илчӗ. Чӗрех иккен, аманман та тем... Вӑл ҫавӑнтах ури ҫине сиксе тӑчӗ, гранатине хатӗр тытса малалла ыткӑнчӗ.

— Глушко, за мной! Ура-а! За родину! За Сталина! Вĕсем иккĕнех, сывлăша сирпĕннĕ дзот патне чупса çитеççĕ, чĕррĕн тăрса юлнă гитлеровецсене ăшалантарма пуçлаççĕ.

## ИККĔН—ÇИРĔМПИЛЛĔК ÇЫННА ХИРĔÇ

Икĕ паттăр темиçе гитлеровеца пĕтерсе тăкрĕç те тата малалла ыткăнчĕç. Вĕсене тата тепĕр боец, Аксёнов, чупса çитрĕ. Анчах та çак харсăрсем нумай та каяймарĕç,—вĕсен пуçĕсем çинче каллех пульăсем шăхăрма пуçларĕç.

— Вырт, Глушко! Вырт, Аксёнов! Ниçталла та ан хусканăр!—приказ парать Лаптев юлташĕсене. Анчах Аксёнов выртса ĕлкĕреймерĕ. Ирсĕр тăшман пульли ăна ĕмĕрлĕхех çут тĕнчерен уйăрчĕ...

Чышкисем тата хытăрах чăмăртанчĕç Лаптевăн. Вăл пуçне çĕклесе пăхрĕ. Ку хутра та гитлеровецсем пулемётранах переççĕ иккен. Ав, ял вĕçĕнчи тата тепĕр пĕчĕкçĕ сăрт ăшĕнчен хĕлхем сирпĕнет.

— Шу ман хыçăмран, пуçна ан çĕкле! Авăрла юлашки гранатусене!—хушрĕ Лаптев украинеца.

Командирпа разведчик, иккĕшĕ те шурă халат тăхăннăскерсем, нимĕçсене асăрхаттармасăрах сарай патне шăвăнса çитрĕç.

— Бей фашистских гадов!

Лаптевпа Глушко сасартăк малалла сиксе ӳксе, кĕтмен-туман çĕртенех тăшман пулемёчĕ çине умлăнхыçлăн темиçе граната вăркăнтарчĕç. Ку пулемёт та ĕмĕрлĕхех тулашма чарăнчĕ.

Лаптев ура çине сиксе тăчĕ. Кĕске кăна перебежка хыççăн яла чупса кĕчĕ. Ялта шăп, чуна хăратса шиклентерекен шăплăх. Командирпа разведчик, автомачĕсене çирĕп чăмăртаса тытнă та, çурт çуммисемпе шăвăнса малалла куçаççĕ. Акă пĕр пӳртрен темиçе çын сиксе тухрĕ. Унтан тепĕр пӳртрен, татах-татах... Хăй-

сем пурте шурă халатсемпе. Вĕсем Лаптевпа Глушко сăмси умĕнченех тенĕ пек чупса иртеççĕ.

— Сахалтан та çирĕмпчлĕк çын,—хăвăрт шутласа илчĕ Лаптев.—Анчах нимĕçсем-ши, е хамăрăннисемех-ши?

Çав самантра пĕр салтакĕ шавкка йытă пек тявлатакан чĕлхепе темĕн вăрçса илчĕ.

— Фрицсем!—çиçĕм пек çиçрĕ шухăш Лаптев пуçĕнче.—Ну, Глушко, тав ту телейна. Аçу-аннӳшĕн, ачу-пăчушăн, юратнă çĕршывшăн тăшманпа тытăçма май пачĕ сана пӳлĕхçу,—тет вăл, автоматне тата хытăрах чăмăртаса. „Эй çĕршывăм—аннем! Вăй-хăват пар санăн тасалăхна шăршлантарнă тăшмансене çĕнтерме хăвăн тăван ывăлна!“—тесе шутлать вăл çав вăхăтрах хăй чĕринче.

Лаптев автоматне çĕклерĕ, çывăхрах кĕпĕрленсе иртекен пĕр ушкăн салтак çине тĕллесе спусковой крючек çине пусрĕ. Анчах пăшал каймасть—е мĕн те пулин пăсăлнă, е дискра патрон çук...

— Ниушлĕ ку ирсĕрсене хамăр çĕр çинчен чĕрĕллех кăларса ямалла? Çук, чĕрĕлле хăтăлаймăр!

Лаптев, нимĕн шутласа тăмасăрах, пĕр нимĕçе хуса çитрĕ те, аллинчи автомат приклачĕпе мĕн пур вăйпала пуçран туртса ячĕ. Лешĕ çавăнтах тĕшĕрĕлсе анчĕ. Унтан иккĕмĕш фрица хăваласа çитсе пуçне нимĕрлентерчĕ. Анчах ку хутра унăн хăйĕн те аллинчи автомачĕ çурмаран хуçăлса кайрĕ. Вăл виççĕмĕш нимĕç аллинчен винтовкă туртса илчĕ те, прикладпа сăптăрса тата икĕ фашист шалçине тултарчĕ. Пиллĕкмĕш нимĕçĕ, юпа пек çӳллĕ кĕлеткеллĕскер, урнă кашкăр пек хаяр иккен. Вĕсем Лаптевпа иккĕшĕ çавăнтах тытăçса ӳкрĕç. Акă нимĕç Лаптевăн пырне хăйĕн хыткан пӳрнисемпе хыпашласа тытрĕ. Акă пăвма тытăнчĕ. Лейтенантăн сывлăш пӳлĕнсе килет. Вăл юлашки вăйне пухса пĕтĕм кĕлеткипе туртăнчĕ те фашистăн вилĕм йăли пек хыткан пӳрнисенчен вĕçерĕнчĕ, унтан хăйне пăвма

пуçларĕ. Сасартăк лешĕ хыткан чĕркуççипе Лаптева хысаран персе унăн сулахай аллине ярса тытрĕ, унтан кашкăр пек кышлама пуçларĕ...

Нумайччен пыратчĕ пулĕ те çак тытăçу, анчах чăсланка нимĕçе ватă казак штыкĕ çĕр çумне пăталаса лартрĕ. Вăл аллисене сарса пăрахрĕ те çăварне карпаласа илчĕ. Унăн кăкринчен шăршлă хура юн юхса тухрĕ.

— Тавтапуç сана, Глушко! Ав фрицсем тараççĕ. Атя, ан юл!—кăшкăрчĕ Лаптев, ура çине сиксе тăрса.

Икĕ фашист траншейăна чăмса кĕрсе кайрĕç. Лаптев вĕсене куçран вĕçертмерĕ:

— Руки вверх! Вылезай, гады!

Тыткăна лекнĕ икĕ нимĕç салтакĕ, аллисене çĕклесе, хăравçăллăн чĕтĕресе тăраççĕ. Шурă юр çинче фашистсен виллисем сапаланса выртаççĕ. Вĕсем вуннăран та кая мар. А вырăссем иккĕн кăна. Икĕ çын çирĕмпилĕк çынна хирĕç çапăçать, вĕсенчен çуррине яхăн пĕтерсе тăкать. Кам вĕçене çав тери паттăрла вăйхăват панă? Тăван çĕршыва, пурнăçа юратни, халăха юратни.

Анчах Лаптев халь ун çинчен шухăшламасть. Вăл тăшмантан тытса илнĕ трофейсене шута илет: 9 миномёт, 12 пулемёт, пĕр тупă, вунпилĕк лаша тата ытти вак-тĕвек.

Урамăн леш вĕçĕнче хăватлăн „ура!" кăшкăрни янраса кайрĕ. Пирĕн пехотинецсем хăйсем енчен пĕр çын çухатмасăрах яла вăркăнса кĕчĕç. Вăхăтлăха нимĕç тыткăнĕнче пăчăхса пурăннă совет ялĕ ĕмĕрлĕхех ирĕке тухрĕ.

* * *

Çакăн пек хаяр çапăçура геройла çĕнтерÿсем тунăшăн, 1942 çулти июлĕн 21-мĕшĕнче, Правительство Павел Васильевич Лаптева Совет Союзĕн Геройĕ ятне парать.

## АРТИЛЛЕРИ НАСТУПЛЕНИ ТĂВАТЬ

1942 çулхи август кунĕсем...

Ирхине çиччĕмĕш сехетре, тĕрĕсрех каласан—ултă сехет те вунпилĕк минутра, артиллери наступлени тума тытăнмалла. Çакăнпа пĕрлех пирĕн войскăсен пĕтĕмлĕ наступлени операцийĕсем те пуçланса каймалла. Тĕплĕн хатĕрленсе çитнĕ пирĕн войскăсем çак саманта. Артиллеристсемпе пехотинецсем çеç мар, лётчиксем те, танкистсем те, сапёрсем те, поварсем те, снарядсене турттаракансем те, автомобильсене иртсе кайма çăмăлтарах пултăр тесе, вăрманти шурлăхсем урлă çул хуракан отрядсем те—пурте хатĕрленнĕ. Пин-пин этем хăйĕн ĕçне, вăй-халне, тăрăшулăхпа пултаруллăхне панă çак наступлени валли эрни-эрнипе тăсăлакан ыйхăсăр каçсенче. Халĕ ĕнтĕ вĕсен пуринĕн те пĕр шухăш кăна: хăвăртрах пуçлантăрччĕ! Ытларах вĕлерсе пĕтересчĕ ылханлă нимĕçе!

Батарея командирĕ Павел Васильевич Лаптев та пулас ĕçсене пурне те шута илсе хисеплесе хунă ĕнтĕ. Вăл хăй боевой разведкăра пулнă, хăех тăшманăн вилĕм кӳрекен тĕввисене шутласа тухса картă çине ӳкерсе илнĕ, нимĕçсен блиндажĕсем хăш тĕлте, мĕнле вырнаçнине, крепоçсем ăçта пулмаллине схема çине ӳкернĕ, тăшманăн çыхăну тытмалли линийĕсем ăçтан иртнисене тĕпчесе пĕлнĕ.

Нимĕçсен оборона линийĕ вăрман хĕррипе тăсăлса иртет, унтан Жиздра ятлă юханшыв патне тухать те ун урлă каçса сулахая пăрăнать, вара, айлăмран иртсен, татах вăрмана пырса кĕрет. Лупашкан ку енче—тăшманăн çирĕплетнĕ огневой точкисем. Лаптев ун çинчен питĕ лайăх пĕлсе тăрать. Анчах вăл пуринчен ытла хăй умĕнче выртакан çĕр лаптăкне, çырма тăрăх йĕплĕ пралукпа карса тухнă вырăна ытларах тинкерсе сăнать. Йĕплĕ пралук картан тепĕр енче—нимĕçсен блиндажĕсем, орудийĕсем, миномёчĕсем, пулемёчĕсем,

лайăх çирĕплетнĕ укреплениййĕсем, пĕренесенчен тунă тĕреклĕ накатсем, тата вырăнĕ-вырăнĕпе бетонран тунă амбразурăсем. Халĕ ĕнтĕ çаксене пурне те пусармалла, аркатса тăкса çĕрпе хутăштарса хумалла.

Çĕрле тăшманăн йĕплĕ пралукĕсем патне пирĕн пехотинецсем шуса кайрĕç. Вĕсем кунта вăрттăн йăпшăнса çитсе пытанса выртрĕç те малтанхи тупă сассине кĕрлесе каяс минута кĕтме пуçларĕç.

Акă пĕрремĕш залп кĕрслетрĕ. Ирхи сивĕ сывлăша таткаласа таçта çитиех хумханса кайрĕ вăл сасă. Ун хыççăн пĕр тăруках темиçе вырăнта вĕçĕ-хĕррисĕр орудисем ĕçлеме тытăнчĕç. Акă хайхи тахçантанпах кĕтнĕ самант тинех пуçланчĕ. Вутлă тăвăл çитсе çапнă пек чĕтретеççĕ тĕнчене хаяр тупăсем, нимĕнле каçарупа хĕрхенӳ чĕлхине пĕлмесĕр. Тамăк вучĕ çуса тăрать тăшманăн малтанхи речĕ çине. Хаяр вут-хĕм кăна сирпĕнсе тăрать тăшман укреплениййĕсемпе блиндажĕсенчен. Ирхи куна çăра тĕтрелле çанталăкри пек тĕтĕм карса илчĕ.

Пĕр самант иртсен пирĕн инçете перекен орудисем ĕçе тытăнчĕç. Вăрмансемпе ансăр юханшывсем, варсемпе çырмасем урлă фронтăн леш еннелле пиншер снарядсем ыткăнчĕç. Тамăк вучĕ, куçа уçса пăхми хăрушă вут валькăшса тăрать тăшман пуçĕ çинче йĕри-тавраллах!

Батарея ĕçĕсене сăнаса пăхса тăракан çирĕп шăмшаклă çынна таçта-таçта темиçе çĕрлĕн сапаланса ларакан орудисен залпĕсем пĕр вăхăтра янра-янра кайни темĕнле, тĕлĕнмелле пек туйăнать. Мĕнле куçа курăнми вăй йĕркелесе пырать ăна çавăн пек? Мĕнле дирижĕр ертсе пырать çак пĕтĕм тĕнчене кисретекен хăватлă хора?

Батарея командирĕ—Совет Союзĕн Геройĕ, аслă лейтенант Лаптев—çывăхри оруди расчĕтне сăнаса илет. Вĕсем пурте сехет механизмĕ пек тĕрĕс те йĕркеллĕ ĕçлеççĕ. Акă наводчик Михаил Карасевский.

Кашни выстрел хыççăн çиçĕм пек хăвăрт та васкавлăн майлаштарса лартать вăл прицела. Акă орудие авăрлакан Василий Кириллов. Циркри артистсем пек çăмăллăн ярса тытать вăл снарядсене, куçа уçса-хупнă самантра уçса-хупать тупă затворне. Акă трубкăна майласа лартакан Александр Беликов, ящечный Иван Величко; вĕсем те ал-ури курăнми тенĕ пек хыпаланса ĕçлеççĕ. Хăйсен пуринĕн те пичĕсем тăрăх вĕри тар юхать,—шăрăх! Çак юлташсен кăмăлĕпе хусканăвĕсене те çав пaçăр асăннă пĕртен-пĕр дирижĕрах аллинчи патаккипе сулласа ертсе пынă пек туйăнать...

Наступлени малтанах хатĕрлесе хунă çирĕп график тăрăх пырать. Кашни оруди, кашни батарея хăйĕн тĕллевĕпе задачине лайăх пĕлсе тăрать. Малтанхи çирĕм минут хушшинче пур орудисем те тăшман тупписемпе миномĕчĕсене, пулемĕтсемпе ытти огневой точкисене вĕри вутпа ăшалантарса тăраççĕ. Çирĕмпĕрмĕш минутра пирĕн артиллери нимĕçсен штабĕсем çине пеме пуçлать. Вăтăрмĕш минутра—телеграф тата телефон çыхăнуне, радиостанцисемпе ытти çыхăну линийĕсене аркатма тытăнать. Кун хыççăн коммуникацисем, çулсем, тылсем çине пĕтĕм вăйпа пырапыра çапаççĕ. Кăна—пирĕн инçете перекен орудисем пуçласа яраççĕ.

Халĕ ĕнтĕ юлашки çирĕм минут! Мĕнпур артиллери хăйĕн вутне тепĕр хут нимĕç оборонин малтанхи речĕ çине—укреплениcемпе блиндажсем çине пăрахрĕ. Тăхăрвуннăмĕш минутра çеç старший лейтенант Лаптев батарейинчи орудисем юлашки хут залппа персе ячĕç те, вара çĕр чĕтреме чарăнса, йĕри-тавралла чуна хăратса тăракан хăрушă шăплăх секунчĕсем пуçланса кайрĕç...

## ПРОРЫВ

Анчах та çак шăплăха тепĕр хут пирĕн самолётсем пăлхатса ячĕç. Çĕршер бомбардировщиксемпе истре-

бительсем артиллери пуçланă ĕçе тĕппипех вĕçлеме сывлăша вĕçсе хăпарчĕç. Пирĕн авиацие оборонăн иккĕмĕш линине пырса çапма тиврĕ, мĕншĕн тесен малти линире фашистсене пĕр чун юлмичченех нимĕрлентернĕ ĕнтĕ.

Шăп палăртса хунă минутăра, пĕр секунд та кая юлмасăр, пехотинецсем вырăнтан çĕкленчĕç те, хăйсен маттур командирĕсем ертсе кайнипе малалла ыткăнчĕç. Лăпкă Донăн таптаса пĕтернĕ уй-хирĕсемшĕн, Ростовра нимĕç тыткăнĕнче асапланакан совет çыннисемшĕн, Майкопри нефть пушарĕсемшĕн, мĕлюншар совет çыннисене пусмăрласа мăшкăл тунишĕн,— пуриншĕн те, пуриншĕн те хаяр тавăру сехечĕ çитсе çапрĕ. Пирĕн мухтавлă войскăсем тăшман оборонине шăтарса тухса çĕнтерӳллĕ наступление куçрĕç.

Пехота наступление кайнă хушăрах, Лаптев хăйĕн батарейне юханшыв урлă каçма приказ пачĕ. Хăй, разведчиксемпе тата взвод управленийĕпе пĕрле, чакакан тăшман хыççăн малалла кайрĕ. Çул çинче вĕсем нимĕççен батарейне тытса илеççĕ. Лаптев, пĕр тытăнса тăмасăр, нимĕç орудийĕсене чакакан тăшман еннелле çавăрса лартма хушать. Разведчиксем матур ĕçлеççĕ. Каланă—ĕçе тунă. Хамăр орудисем пырса çитиччен, вĕсем тăшман пуçĕ çине нимĕç орудийĕсенченех 180 снаряд кăларса яраççĕ. Хамăр орудисем çитсен, Лаптев пехотăпа пĕрле тăшман войскисене каллех малалла хуса каять.

Хĕрлĕ Çарăн тăшмана хуса пыракан малти чаçĕсем Мурыгино ялне çитеççĕ. Кунта нимĕçсем пысăк вăй пухса тăратнă. Тăшман контратакăсем тума тытăнать. Нимĕççен вăйĕ вырăссеннинчен темиçе хут пысăкрах пулин те, пирĕннисем чакмаççĕ. Лаптев батарейи вирлĕн çапса тăнипе пирĕн пехота нимĕççен темиçе контратакине каялла сире-сире ярать. Çак вăхăтра кунта Хĕрлĕ Çарăн тĕп вăйĕсем те пырса çитеççĕ. Тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, ăна каллех малалла хăвалама пуçлаççĕ.

Пирĕн мухтавлă герой Лаптев çак наступленире арăслан пек паттăрăн çапăçать. Вăл, хăйĕн батарейсенчи орудисене пĕтĕмпех мала илсе тухса, пехотăран пĕр утăм юлмасăр, чакакан тăшмана хыçранах çунтарса пырать. Ун орудисен кĕпçисем тӳсме çук хĕрсе çитеççĕ.

Нимĕççем пысăк çухату тăваççĕ. Пĕр Лаптев дивизионĕ хăех тăшмана çав тери пысăк çухатусем кӳрет. Унăн батарейсем çак юлашки çапăçусенче кăна нимĕçсенне пин çурă ытла салтаксемпе офицерĕсене пĕтерсе тăкаççĕ, 13 оруди, 33 миномĕт, 90 пулемĕт çĕмĕреççĕ, пиллĕк çар складне çунтарса яраççĕ.

Ака Погорелое—Городище патĕнче тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене илсе пыраççĕ. Вĕсем, çĕтĕк-çатăк тумланнăскерсем, пыйтланса-шăршланса кайнăскерсем, пуçĕсене чиксе хуйхăллăн утаççĕ. Вĕсем, Аслă Россия хуçийĕсем пулма ĕмĕтленнĕ, пĕтĕм тĕнче пуçлăхĕсем пуласшăн пулнă, халĕ ĕнтĕ вĕсен выçă ĕмĕчĕсем ĕмĕрлĕхех намăслăхпа витĕнчĕç.

Нимĕçсен вăйлăн çирĕплетнĕ оборона линине татса вĕсене аркатас ĕçре Лаптев батарейсем уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăнă. Çакна шута илсе, Правительство пирĕн тăван героя, Павел Васильевич Лаптев юлташа, Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăланă.

Ĕмĕр пĕтми чаппа мухтав—чăваш халăхĕн паттăр ывăлне!

## ПУРНĂÇА ЮРАТНИ

Çутă та аслă пӳлĕмре туллиех халăх. Пӳлĕм варрине темиçе сĕтеле вĕçе-вĕçĕн сыпăнтарса лартса пысăк кĕреке тунă. Кĕреки çине колхозри чи матур хĕрсем тĕрлесе илемлетнĕ шап-шур çиттисем сарса хунă. Сĕтел тăршшипех—çулла та хĕлле те куçа илĕртекен чечексем. Аслă кĕрекен икĕ енĕпе хыçлă пукансем. Кашни пукан—ялти чи хисеплĕ колхозник ятне.

Хисеплĕ çынсем „Красная жатва“ колхозра сахал

мар. Вĕсене хăшне-пĕрне вырăн та тивĕçтерме çук иккен, çавăнпа колхоз председателĕ кĕçĕрхи чаплă ĕçкĕ-çике икĕ черетпе ирттерме шут турĕ. Халĕ акă сĕтел хушшине чи ватă стариксемпе карчăксем вырнаçса ларнă та, çине-пуçне тирпейлекелесе, хисеплĕ хăна килсе кĕрессе кĕтеççĕ.

Колхоз председателĕн чунĕ темшĕн пĕртте вырăнта мар. Те хумханнипе, те çав тери савăнса ӳкнипе тата темĕн çитмен пек туйăнать ăна мухтавлă героя кĕтсе илмешкĕн. Вăл унăн-кунăн кускаласа çӳрет, чапа тухнă тăван ял çыннине камăн мĕнле сăйламаллине кала-кала тăнлантарать.

— Эсĕ, Кĕтерне аппа, Павлуш килсе кĕнĕ-кĕменех, унăн тумтирĕсене чăлана кĕртсе çак. Эсĕ Матĕрне, ăна ак çак вырăна илсе килсе ларт. А эсĕ, Уçăп мучи—чи ватти, ăна сăра-эрехпе сăйлама пуçла. Май пулсан, хăй сисиччен, симпылĕ ăшне çуттине хутăштарма та юрать,—атту тен вăл эрехне хăйне халлĕнех ĕçмесп, тейĕ...

— Ăна хамăрах пĕлĕпĕр-çке,—куçне чеен хĕстерсе сухалне шăлать старик.

— Укçине, санăн унта апатусем пурте хатĕр-и?—ыйтать председатель.

— Вучахра така шӳрпи вĕресе тăрать, кăмакара мăн çатмапа шăрттан ăшаланать, чугун-чӳлмексенче автан ашĕ шарикленет,—тавăрать пиçсе çитнĕ çырла пек хĕр.

— Ну-ну, юрĕ. Пурте хăвăр вырăнта пулăр. Пирĕн килес хăна—хамăр ял çынни çеç мар, Совет Союзĕн Геройĕ вăл халь. Ăнланатăр-и?—ăс парать председатель.—Йĕркеллĕ калаçăр унпа...

Колхозниксем пурте самантлăха шăпланаççĕ те чаплă хăнана кĕтме пуçлаççĕ. Пĕр вăхăт хушши пурте нимĕн сăмахсăр лараççĕ. Час иртмест те иккен кĕтнĕ чухнехи вăхăт! Мĕншĕн çаплах килмест-ха Павлуш? Е ăçта та пулин урăх çĕре чĕнсе каймарĕç-ши ăна?

Уçӑп мучи, ик-виçӗ хутчен те канӑçсӑррӑн сике-сике тӑрса чӳречерен пырса пӑхрӗ, алӑк патнелле те темиçе хутчен çаврӑнса пӑхрӗ,—килтен, карчӑкӗнчен вӑрттӑн, чиксе килнӗ çур литр эрех кӗленчин пробкине те çынсем асӑрхамасла уçса хатӗрлерӗ, анчах Павлуш çаплах çитеймерӗ-ха. Юлашкинчен унӑн тӳсӗмлӗхӗ чикӗрен тухса кайрӗ курӑнать.

— Çук, чӑтса пулмасть урӑх капла кӗтсе ларса,— терӗ вӑл ӗнсине хыçса илсе.—Хам каятӑп чӗнмешкӗн!

Шӗвӗр сухаллӑ старик картусне пусса лартрӗ те урамалла тухрӗ. Анчах вӑл кайсан нумай та иртмерӗ, çелникре сӑран атӑллӑ çирӗп ура сассисем илтӗнчӗç. Çав самантрах пӳрте çар тумтирӗ тӑхӑннӑ вӑйпитти тӗреклӗ çын кӗрсе тӑчӗ. Унӑн сарлака кӑкри çинче „Ылттӑн çӑлтӑр" тата Ленин орденӗпе Хӗрлӗ Çӑлтӑр орденӗсем йӑлтӑртатса çунаççӗ.

— Сывӑ-и, савнӑ тӑвансем!—терӗ вӑл, хӑйӗн ял-йышӗсем çине кӑмӑллӑн пӑхса.—Акӑ эпӗ те килсе çитрӗм тӑван ялăма.

— Ой, Павлуш! Мӗнле çаврӑнса çитме пӗлтӗнех, ачам? Сывах-и, аманман та-и?—хавасланса тӗпчеме пуçларӗç ватӑсем.

— Сывах-ха... Аманнӑччӗ—сывалтӑм,—тавӑрчӗ Павел Васильевич пуринпе те алӑ тытма пуçласа.—Хӑвӑр епле пурӑнатӑр?

— Эпир кунта вут ӑшӗнче мар. Пурӑнатпӑр.

— Кӳр, Павлуш ывӑлӑм, плащна чӑлана кӳртсе çакам.

— Ан чӑрман, Кӗтерне аппа. Эп хамах.

— Ак кунта иртсе ларӑр, Павел Васильевич,— йӑпӑртатса чупса пырса хулӗнчен тытрӗ ӑна çамрӑк Укçине.—Çав териех улшӑнса кайнӑ-çке эсир?

— Ну, Павлуша, тавтапуç сана ял-йыша килсе курнӑшӑн, пире, ватӑсене кӑмӑл тунӑшӑн! Лар, каласа пар, епле çаврӑнса çӳрерӗн,—сӑмахлама пуçларӗ колхоз председателӗ, Лаптев аллине хавассӑн чӑмӑртаса.—

Тултарăр, юлташсем, куркăрсене, килти çынсем пек пулăр.

Колхозниксем пурте умри стаканĕсене кăпăклă ăшă сăра тултарчĕç. Сĕтел çине темĕн тĕрлĕ савăт-сапапа апат-çимĕç тухса ларчĕ. Колхоз пуçлăхĕ сăмах калама ури çине тăчĕ:

— Эпир паян, юлташсем, хамăрăн хаклă тăвана, Отечественнăй вăрçă фронтĕнче паттăрăн çапăçса мухтава тухнă героя, Павел Васильевич Лаптева, йышăнатпăр. Малтанхи куркана эпĕ Павел Васильевич сывлăхĕшĕн ĕçме сĕнетĕп. Тĕппи курка!—терĕ вăл.

— Сирĕн сывлăхăршăн, Павел Васильевич!

— Чимĕр, тăвансем, епле вара мансăрăн?—илтĕнчĕ çак самантра алăк патĕнчен пĕр сасă. Унччен те пулмарĕ, пухăннă çынсем хушшинчен тĕпелти сĕтел умне Уçăп мучи хĕсĕнкелесе тухрĕ.

— Павлуша! Эк-кей, ачупала! Эп сана пĕтĕм Пухтелĕпе шыраса çӳретĕп вĕт,—савăнса ӳкрĕ старик Лаптева курсассăн.—Кӳр-ха, эп сана аçу вырăнне чуптуса илем çамкунтан! Эк-кей, катăршнăй! Епле тĕрекленсе кайнă вăл. Юман кĕреш пек!

Уçăп мучи аллине пысăк алтăр тытрĕ те нимĕн сывламасăр пĕр алтăр сăрана çавăрса хучĕ.

— Вăт çапла ĕçеççĕ ăнă чăвашсем!—терĕ вăл унтан, сухалне шăлкаласа.

— Юлташсем, шăпланăр! Павăл Ваçилча сăмах паратăп,—илтĕнчĕ председатель сасси. Лаптев ура çине тăчĕ, пиçиххине тӳрлетрĕ, хăйĕн ял-йышĕсене куçпа пăхса çаврăнчĕ.

— Эпĕ, тăвансем, нумаях каласа тăраймăп,—пуçларĕ вăл лăпкă сасăпа.—Калас сăмахăм ман вăрăм мар: мана çывăх çын вырăнне хурса çакăн пек чаплăн кĕтсе илнĕшĕн сире пурсăра та чĕререн тавтапуç тата хĕрӳллĕ салам... Эпир сирĕнпеле пурсăмăр та пĕр ĕçех тăватпăр—тăшман валли вилĕм хатĕрлетпĕр. Эсир кунта—хĕрӳллĕ ĕçпе, эпир фронтра—вутпа та хĕçпе.

— Ну, апла мар, çу-ук... Пире хăвăрпа ан танлаштар,—пӳлчĕ Лаптева хăйпе юнашар шĕвĕр сухал.— Эпир çĕр чавакансем кăна, а эсир чăн-чăн паттăрсем.

Старик мăрăлтатса калаçнă хушăрах, кĕсйинчен эрех кĕленчи туртса кăларчĕ те, çынсем асăрхиччен ăна Лаптев стаканĕ çине ярса çурри ытла пушатрĕ.

— Яруй сывлăхĕшĕн ĕçер, атсемĕр!—терĕ вăл унтан, ури çине сиксе тăрса.

— А эпĕ, тăвансем, Уçăп мучи сывлăхĕшĕн ĕçесшĕн,—ответлерĕ Павел Васильевич, старик чеелĕхне хăрах куçпа сăнаса сиснĕскер.—Савăш курки туса ĕçесшĕн. Мĕнле ĕçетчĕç-ха çав савăш куркине? Астумастăн-и эс, Уçăп мучи?

— Ăна-и? Ăна тĕппипе шак тутарса ĕçеççĕ.

— Тата?

— Тата стакансене улăштарса ĕçеççĕ.

— Вăт, вăт. Улăштарар-ха эппин куркасене!

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Питĕ вăрахах кайрĕ колхоз ĕçки. Пĕркеленчĕк питлĕ ватăсемпе уйăх пек сăн-сăпатлă çамрăксен пичĕсем çинче юн вылять ĕнтĕ. Темĕн тĕрлĕ эпизодсем те каласа пачĕ Павел Васильевич хăйсен ял çыннисене, анчах вăрçă калавĕсем çаплах вĕçленмеççĕ-ха. Ăçтан пĕр каçрах каласа пĕтерĕн мĕн-мĕн курнине, мĕн-мĕн илтнине, мĕн-мĕн тӳссе ирттернине? Ун çинчен халĕ темиçе томлă хулăм кĕнекесем çырас пулать!

Уçăп старик тахçанах хĕрсе çитнĕ. Шутпала халĕ унăн çавăнтах ура хуçса ташша ярасси кăна юлнă, анчах та вăл хăйне-хăй çапах виçерен кăлармасть, сăмахпа çеç пуринчен ытларах пакăлтатса калаçать. Çитменнине тата колхоз пуçлăхĕ хутран-ситрен сивĕн пăхкаласа илни те виçерен тухма памасть ăна.

Сăмах енчĕкĕ пуян ватă Уçăпăн. Вăл калаçать, кулать, шӳт тукаласа илет, пĕчченех кĕрекене тултарса ларать.

— Ну, Павлуша, халӗ иксӗмӗр ҫирӗмӗр-ӗҫрӗмӗр,— каласа пар мана ӗнтӗ пӗр сӑмах?

— Мӗн каласа парас?

— Каласа пар тӗрӗссипе: хӑруша-и вӑрҫа вӑрҫмашкӑн?

—Хӑруша мар вӑрҫӑ вӑл йытӑпа кушак хушшинче кӑна пулать. А эпир чи тискер кайӑксене хирӗҫ ҫапӑҫатпӑр.

— Ну, тепӗр сӑмах та ыйтам тата: мӗнле асамлӑ хӑват вӑй парса пырать сире тӑшмана ҫӗнтермешкӗн? Пурнӑҫа юратни-и, е вилӗмрен хӑраманни-и?

— Ан йӗрӗнтерсе лар ӗнтӗ ват супнӑ пуҫупа!— пӳлчӗ старике председатель тарӑхса. Сансӑрӑннах пӗлет пулӗ.

— Ан тив, калаҫтӑр.

Старик кӳреннӗ пек пулчӗ. Вӑл вӗриленсе ури ҫине сиксе тӑчӗ.

— Вӑл-и? Вӑл ҫамрӑк халӗ, ман чухлӗ пурӑнса курман. Ҫавӑнпа та эпӗ ответлеме тивӗҫлӗ уншӑн. Пурнӑҫа юратни, халӑха юратни, ҫак тулли кӗрекене юратни—акӑ мӗн иксӗлми вӑй парать совет паттӑрӗсене. Тӗрӗс калатӑп-и эп, Павлуш?

— Тӗрӗсрен те тӗрӗс!

— Кӳр, апла пулсан, тутунтан чуптуса илем сана...

## ПАВЕЛ ВАСИЛЬЕВИЧ ЛАПТЕВӐН КӖСКЕ БИОГРАФИЙӖ

Павел Васильевич Лаптев 1911 ҫулта Ульяновск облаҫӗнчи Пухтел районӗнче, Пухтел ялӗнче ҫуралнӑ. 1923 ҫулта пуҫламӗш шкултан вӗренсе тухнӑ. 1933-35 ҫулсенче действительнӑй ҫар службинче пулнӑ. Унтан таврӑнсан, вӑл пӗр ҫул хушши Ульяновскри Совпартшколта вӗреннӗ. Советпа парти шкулӗ ӑна пурнӑҫа тӗрӗс ӑнланма вӗрентнӗ. Совпартшколран тухнӑ хыҫҫӑн

Лаптев юлташ ялсовет председателĕн заместителĕ тата „Красная жатва“ колхозра завхоз пулса ĕçлет.

1938 çулта унăн мĕн пĕчĕкрен ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ пурнăçланнă. Вăл чи хисеплĕ те чыслă ĕçе—Харьковри артиллери училищине вĕренме кĕнĕ. Унтан Мускавра вĕренет. Çар шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн Литва ССР-че çар службинче тăрать.

1939 çулта Лаптев юлташа кĕçĕн лейтенант званине параççĕ. Ун хыççăнах вăл Хĕвеланăç Белоруссие ирĕке кăларас походра пулнă. 1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕнче, нимĕç захватчикĕсем Совет çĕршывне вăрçăпа килсе тапăнсан, Лаптев юлташ тӳрех фронта тухса каять. Вăл унта нумай çапăçусенче пулать, батарея командирĕ пулса ĕçлет, нимĕç фашисчĕсене нимĕн хĕрхенмесĕр пĕтерсе пырать.

Тăван çĕршыва тăшмантан тасатас ĕçре паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Правительство ăна малтанхи хут Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе, унтан Совет Союз Геройĕ ятне парса—Ленин орденĕпе тата „Ылттăн çăлтăр“ медальпе наградăлать. Герой ятне панă хыççăн Лаптев татах тепĕр пысăк награда—виççĕмĕш орден—Хĕрлĕ Ялав орденĕ илет.

Отечественнăй вăрçăра Лаптев виçĕ хут суранланнă. Анчах та суранĕсенчен часах сывала-сывала каллех фронта кайнă.

Хальхи вăхăтра П. В. Лаптев, майор званинче тăрса, артиллерин пысăк подразделенине ертсе пырать.

---

Цена 2 руб.

И. С. ТУКТАШ

ПАВЕЛ ЛАПТЕВ

Герой Советского Союза

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары 1944